26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
10
ШАМАТКУН
140(6377) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Обкомĕнче

Вăрнар районĕнчи „Майăн 1-мĕшĕ" колхозри агитколлективăн ĕçĕсем çинчен

Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Вăрнар районĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозри агитколлективăн ĕçĕсем çинчен итлесе сӳтсе-яврĕ. Агитацилле-массăллă ĕçе анлăн туса пыни «Майăн 1-мĕшĕ» колхоза вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи пысăк задачăсене ăнăçлăн татса пама пулăшнă. Колхоз районра çуракине чи малтан пĕтерекенсенчен пĕри пулнă. Пĕрлешӳллĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1943 çулхи плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Тырпулсемпе пахча-çимĕçсене иккĕмĕш хут çумланă, çĕртме туса пĕтернĕ, хире 10.000 лав ытла тислĕк кăларнă. Утă çулса пуçтарас ĕç йĕркеллĕн пуçланнă. Колхоз вăйлă тырпула пухса кĕме пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ.

Политикăллă агитаци ĕçне колхозри 5 коммунист пурте туса пыраççĕ. Докладсем, калаçусем ирттерес, хаçатсемпе Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене тата фронтовик-земляксен патриотла çырăвĕсене вуласа парас ĕçе тăтăшах туса пыраççĕ. Стена хаçачĕ кăларассине те ыт. те. Пĕтĕм политикăллă-массăллă ĕçе Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне тăрăх кĕртес, фронта пулăшассине вăйлатас енĕпе туса пыраççĕ.

Çакăнпа пĕрлех агитколлективăн ĕçĕсенче пысăк ситменлĕхсем те пур. Агитколлектив плана тăрăх ĕçлемест. Агитаторсем совещанисене кайнашкăн сайра хутра çеç пухăнаççĕ, хăйсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ситĕнсĕр ĕçлеççĕ. Агитаторсен ĕçри опытне сарса пыни çук, вĕсем валли материалсем пухса парас ĕçе йĕркелемен. Агитаторсем хушшинче тӳрремĕнех колхоз производствинче ĕçлекен колхозниксем сахал. Агитацăллă-массăллă ĕçе комсомолецсене начар та ситĕнсĕр явăçтарнă (17 комсомолецран 2-шĕ кăна политикăллă агитаци ĕçне туса пыраççĕ), агитаци ĕçне ялти интеллигенцие те ситĕнсĕр явăçтарнă. Массăллă-политикăллă агитаци халиччен пур колхозниксене те çитеймест-ха. Агитацăллă-массăллă ĕçĕн вăйтăвĕсене колхозри парти канидачĕсен группи пухăвĕсенче сӳтсе-явмаççĕ.

Парти райкомĕн пропагандистсем агитколлектив руководительне агитаторсемпе куллен пулăшса тымаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ агитколлективăн ĕçне çак çирĕпне решени йышăнчĕ.

«Майăн 1-мĕшĕ» колхози канидатсен группине парти пухăвĕсенче агитколлектив руководителĕн отчечĕсене вăхăтран вăхăтах итлеме хушнă, агитколлективăн ĕç планĕсене сӳтсе-явмалла, политикăллă агитаци ĕçне комсомолецсене, колхозри актива анлăн явăçтармалла, агитаторсене хушнă ĕçшĕн ответлă пулма вĕрентсе пымалла.

Колхозниксемпе колхозницăсене Сталин юлташăн вăрçă кунĕсенчи выступленийĕсене тĕплĕн ăнлантарса памалла, партипе правительство решенийĕсем çинчен, отечественнăй вăрçăн иккĕ çулти итогĕсем çинчен, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тĕплĕн ăнлантарса памалла, фронтовик-земляксен вăрçăри ĕçĕсемпе паллаштарса массăсене колхоз умĕнче тăракан конкретнăй задачăсене пурнăçа кĕртме, тырпулсене кăтартуллăн хатĕрлесе пухса кĕртме мобилизацилемелле.

Агитаци ĕçĕн идейăпа политика тĕлĕшĕнчи пахалăхне çĕклес тата унăн витĕмлĕхне ӳстерес шутпа, агитколлективăн руководительне Якимова юлташа 10 шутран кая мар агитаторсене суйласа, вĕсене инструкци пама, кулленех консультацисем ирттерме хушнă.

Агитаторсем колхоз ялĕсенче хăйсен ĕçĕсене туса пымалла, агитаторсем калаçусем ирттермелле, хаçатсемпе Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене вуласа памалла.

Кашни агитатор тӳрремĕнех производствăра ĕçлесе, ĕçре тĕслĕх кăтартмалла.

ВКП(б) Вăрнар райкомне агитаторсен ĕçне идейăпа политика тĕлĕшĕнчен ӳстерес енĕпе тăтăшах тимлĕх пама, çак майпа семинарсем ирттерме, тĕрлĕ темăсем çинчен лекцисем, кружоксем тума хушнă. Агитаторсем валли литература тупса парас ĕçре пулăшмалла.

Кадрсем хатĕрлесси—ответлă ĕç

Фашистсемпе вăрçăра çĕнтерӳ тăвас тесен Хĕрлĕ Çара орудисем, автоматсем, минометсем, боеприпассем, снарядсем, авиабомбăсем ытларах та ытларах кирлĕ. Çак задачăсене ăнăçлă пурнăçлас тесен пысăк квалификациллĕ кадрсем хатĕрлесси пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Якунин юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводра иртнĕ çулта нихăçан завода ĕçлесе курман çамрăк хĕрарăмсем те ĕçлеме пынă. Вĕсенчен хăшĕсем хутла та сахал пĕлнĕ. Цех начальникĕсемпе мастерсем умĕнче пысăк задача тăнă. Çак ĕçре юратакан хĕрарăмсене вĕрентсе, квалификациллĕ работницăсем тумалла. Ку тĕлĕшпе мастерсем пит нумай ĕçлеççĕ. Малтанах вĕсем валли кашни цехрах техминимум кружокĕсем организацилерĕç, унта уйрăм цехсен ĕçĕсемпе паллаштарнă. Кунсăр пуçне хăшне-пĕрне лайăх ĕçлекен рабочисемпе стахановецсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем кĕске вăхăт хушшинчех лайăх ĕçлекен работницăсем пулса тăчĕç. Пĕр цехăн старши мастерĕ Жигунов юлташ 50 çынна яхăн производствăра ĕçлеме вĕрентсе кăларнă. Вĕсенчен чылайăшĕсем халĕ стахановкăсем пулса ĕçлеççĕ. Долгушина, Смирнова юлташсем завода ученица пулса кĕнĕ пулсан, халĕ 5-мĕш разрядлă работница шутĕнче ĕçлеççĕ. Гусева юлташ 1942 çулта завода прессовщицăна вĕренме кĕнĕ, халĕ вăл ĕç нормине куллен 200—250-шар процент тултарса пырать.

Стахановла шкулсемпе техминимум кружокĕсем рабочисен производствăри ăсталăхне ӳстерме нумай пулăшаççĕ.

Çавна шута илсе, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода рабочисемшĕн 65 процент çак шкулсенче кружоксен витĕр вĕрентсе мастерсем, конструкторсем ертсе пычĕç. Комсомолка Брусловская станочница шкулра вĕренсе тухнăранпа куллен заданине 120—130 процент ăнсăр тултарса пынă. Халĕ вăл кашни кун хăйĕн заданине 200 процента тултарать. Стахановка слесарь М. Чиркова юлташ стахановла шкулта вĕренсе тухсан мастер пулса ĕçлеме тытăннă. Кашни шкулăн кружоксем техминимум кружокĕсене кашни цехрах халĕ те ĕçлесе пыраççĕ. Кашни шкулăн, кружокăн хăйĕн уйрăм программи пур. Çав программа тăрăх вĕренсе, рабочисемпе работницăсем хăйсен квалификацине ӳстерсе пыраççĕ.

Рабочисем производствăри квалификацине ӳстернипе пĕрлех политикăлла пĕлĕве те ӳстерессишĕн тăрăшаççĕ. Кашни цехрах хĕрлĕ кĕтессем организациленĕ, унта куллен тĕрлĕ темăсемпе калаçусем туса ирттереççĕ. Агитаторсем рабочисене хаçат журналсем вуласа параççĕ. Халĕ цехсенче «Совет Союзĕн отечественнăй вăрçин иккĕ çулталăкĕ» темăпа занятисем пулса иртеççĕ.

Кадрсене вырăнтах хатĕрлесси—вăл ответлă ĕç. Ку ĕçе малашне те анлăн туса пымалла. Предприяти руководителĕсен çак кирлĕрен те кирлĕ ĕçе тума мастерсене пулăшса тăмалла, вăхăтра кирлĕ кăтартусем памалла.

Е. ОГОРОДНИКОВА.

ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ПУЛТАРУЛĂХ СМОТРĔ

КАЛИНИНО. Çак кунсенче районри художествăллă пултарулăх смотрĕ пулса иртрĕ. Смотра пурĕ 16 кружок хутшăнчĕ.

Смотрта малти вырăна Калининăри вăтам шкул йышăнчĕ. Ку шкул смотра тивĕçлипе хатĕрленнине палăртмалла. Ытти кружоксем те (Калининăри педучилище, Уйкас Ювтапари вăтам шкул, Юманайĕнчи вăтам шкул) начар мар хатĕрленнĕ. Кусемпе пĕрлех Чăваш Хирлепри И. Михайлов хăйĕн тĕрлĕ фокуслă номерĕсене кăтартса пачĕ. Туçи Мăратри, Ассакассинчи, Алгазинăри тата ытти кружоксем, тивĕçлĕ хатĕрленеймен пирки, смотра хутшăнмарĕç.

Н. НИКИТИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОРЕЛПА КУРСК тата БЕЛГОРОД енĕсенче тăшман пехотипе танкĕсен малалла тапăнса пыракан пысăк вăйĕсемпе хаяррăн çапăçнă. Малтанхи кунсенчи пекех, нимĕçсен наступленине йышлă авиаци пулăшса пынă. Сывлăшра кунĕпех хаяр çапăçусем пулса пынă.

Орелпа Курск енче тăшманăн пур атакăсем туса, пирĕн войскăсем тăшмана атакисене те сирсе янă. Ăнăçлăн контратакăсем туса, пирĕн войскăсем тăшмана вăл наступленин малтанхи кунĕнче йышăнса илнĕ темиçе пунктран хăваласа кăларнă, пирĕннисем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Белгород енче тăшман танкĕсен ушкăнĕ пирĕн войскăсем тăракан вырăна савăлланса кĕме пултарнă.

Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пирĕн войскăсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 304 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери тăшманăн 161 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орелпа Курск енче тăшман иркĕшне ирĕх çĕнĕрен наступлени пуçласа янă. Халăх пурăнакан пĕр пункт районĕнче, пĕр анкăр участокра, нимĕçсем çапăçăва 3 танковăй тата 3 пехотнăй дивизи кĕртсе янă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн умлăн-хыçлăн тунă 13 хаяр атакине сирсе янă, пĕр утăм та каялла чакман. Çав ăнăççăр атакăсенче тăшманăн 5 пин салтакпа офицер ытла, 120 танка çити, 33 оруди, 150 пулемет тата 210 автомашина пĕтнĕ.

Орелпа Курск енчи тепĕр участокра пирĕн войскăсем темиçе хутчен ăнăçлă контратакăсем тунă. Тăшмана вăл наступленин малтанхи кунĕнче йышăнса илнĕ халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă.

Çапăçу хирĕнчен совет воинĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен калакан хыпарсем нумай килеççĕ. Дудаур лейтенант командир пулса тăракан артиллери батарейи çине нимĕçсем сывлăшран бомбăсем пăрахнă тата артиллерирен пенĕ. Ун хыççăн тăшман пехотипе танкĕсем çав батарейăн позицийĕсене атакăланă. Артиллеристсем тăшмана çывăхах янă та тĕл персе унăн «Тигр» ятлă темиçе йывăр танкне çунтарса янă. Артиллеристсен ушкăнĕ тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен орудине тытса илсе, унпа нимĕç пехотине пеме тытăннă. Лукашинпа Шурманов разведчиксем тăшманăн наблюдательнăй пунктне пырса кĕнĕ, 533-мĕш полкри обер-лейтенанта вĕлернĕ, документсем, радиостанци, стереотруба тытса илнĕ. Каялла хăйсен чаçне таврăннă чухне разведчиксем тата темиçе нимĕçе вĕлернĕ. Бронебойщиксем кĕçĕн сержант Фомиченко тата Пешков красноармеец нимĕçсен пикировка тăвакан бомбардировщикĕсен атакине сирсе янă чухне «Юнкерс—88» йышши 2 самолета персе ӳкернĕ. Грачков красноармеец хăйĕн мĕнпур патронĕсене персе пĕтернипе тыткăна лекнĕ. Çул çинче Грачков хăйне хуралласа пыракан икĕ гитлеровеца вĕлернĕ те хăйĕн подразделенине таврăнса, çĕнĕрен çапăçма тытăннă.

* * *

Белгород енче вăйлă çапăçусем пынă. Тăшман танкĕсемпе пехотин колоннисем, авиацин йышлă вăйĕсем пулăшса пынипе, совет позицийĕсене пĕр чарăнмасăр штурмланă. Пур йышши хĕçпăшалсемпе те персе, пирĕн чаçсем тăшманăн çыннисемпе техникине пĕтерсе пынă, тăшмана хирĕç пыра-пыра çапса, унăн штурмлакан колоннисене каялла ывăта-ывăта янă. Каçпала нимĕç танкĕсен пĕр ушкăнĕ пирĕн оборонăна савăлланса кĕме пултарнă.

Çапăçусенче красноармеецсемпе командирсем калама çук пысăк çирĕплĕхпе хастарлăх кăтартаççĕ. Пирĕн пехота нимĕç танкĕсене хăйĕн çапăçури речĕсем урлă каçса кайма парать, унтан тăшман пехотине çав танксенчен татса илет те ăна вĕлермеллех пыра-пыра çапать. Çав вăхăтра пирĕн артиллеристсемпе танкистсем тата бронебойщиксем шала татса кĕнĕ тăшман танкĕсене перепере çĕмĕреççĕ. Пирĕн боецсем пыра-пыра çапнипе нимĕç войскисем çыннисемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă темиçе çĕр танкĕ тата çĕмĕрĕлнĕ автомашинисемпе самолечĕсем нумай сапаланса выртаççĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче разведка тăвакан отрядсем активлăн кĕрешнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсен роти пирĕн позицисене атакăланă. Совет боецĕсем хирĕç пырса çапса, нимĕçсене хăйсен малтанхи рубежĕ патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 60 вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн разведка тăвакан ушкăн, сасартăк пырса çапса, тăшмана пĕр высота çинчи позицисенчен хĕсĕе кăларнă. Пĕр соединенири снайперсем юлашки уйăх хушшинче 374 гитлеровеца вĕлернĕ. Засенко снайпер çав вăхăт хушшинче 24 нимĕçе, Бойненко снайпер 20 нимĕçе, Петренко снайпер 14 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пĕр-пĕрин çине чылай вăйлăн персе тăнă. Пирĕн артиллеристсем тăшманăн 3 блиндажне ишсе антарнă, боеприпассен склачĕсене сирпĕнтерсе янă, артиллерипе минометсен 20 батарейине çити пусарса ларнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн разведка тăвакан отряд тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Разведчиксем нимĕç ефрейторне тыткăна илнĕ, пĕр миномет, икĕ пулемет тата темиçе винтовка тытса илнĕ. Совет артиллерийĕпе миномечĕсенчен персе, тăшманăн 9 дзотне, 4 наблюдательнăй пунктне, 5 землянкине тата 24 пулемет точкине пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçри снайперсем 70 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Каменец-Подольски облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ июнь уйăхĕнче нимĕçсен войскăсемпе техника турттарса пыракан 7 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче темиçе çĕр гитлеровец пĕтнĕ. Разведчиксем çакна пĕлнĕ: нимĕçсем вырăнти çынсенчен туртса илнĕ продовольствие фронта яма хатĕрленеççĕ иккен. Совет патриочĕсем тăшман базисене пырса тапăннă та 6 склада аркатса тăкнă. Нумай продуктсене халăха каялла таврăнса панă.

Пирĕн авиаци тăшман войскисене пыра-пыра çапни

Июлĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиацин йышлă вăйĕсем Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче тăшман войскисемпе техникине çаплах пыра-пыра çапнă. Пирĕн самолетсем тăшманăн чугунçул эшелонĕсем çине, пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисем, танкĕсем, автомашинисемпе обозĕсем тата шыв урлă хывнă каççисем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса тăшмана пысăк сиен кӳнĕ. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Çĕнĕ специалистсем

Пĕр çар училищинче Чăваш республикинчен килнĕ курсантсем вĕренчĕç. Вĕсем вĕренӳре хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Подразделенири курсантсенчен 90 процентĕ «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пычĕç. В. Денисов, В. Лукин, Л. Михайлов, М. Михайлов, В. Мурзаев тата ытти курсантсем те вĕренӳре яланах малта пычĕç. Кĕрешӳ хирне тухса кайнă чух вĕсем: «Эпир çапăçу хирĕнче те вĕренӳри пекех çитĕнӳсем тума сăмах паратпăр. Орденлă тăван республикăн ятне ваталамăпăр», терĕç.

Лейтенант Н. ГРИГОРЬЕВСКИЙ.

Ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшмаççĕ

ШĂХАСАН. «Сталь» промартелĕн ĕçĕсене илсе пăхсассăн, аван тесе калама пулать. Ĕç планне вăл кашни уйăхрах тултарса пырать. Июнь уйăхĕнчи производство программине 102 процент тултарнă.

Анчах ĕçĕн пахалăхне илсе пăхсассăн, вăл калама çук начарри курăнать. Вăл ĕçе тĕрĕслесе тăракан та çук.

Атă-пушмак юсакан цехри рабочисем (цех начальникĕ Шерман) урапа тăхăнмалли япаласене ячĕшĕн çеç юсаççĕ. Унта юсанă япаласем виçĕ-тăватă кунтан тăпăлса та тухаççĕ

— Япаласене начар юсанишĕн эпир айăплă мар, производство заведующийĕ Егоров çĕлеме яланах çĕрĕк çип парать, çавна пула япаласене лайăх çĕлейместпĕр,—теççĕ цехри рабочисем.

Ку цехра рабочисем час-часах ĕç çук тесе, ахаль лараççĕ. Çав вăхăтрах япала юсама илсе пыракан çынсен заказĕсене йышăнмаççĕ.

Артель председателĕ коммунист Иванов заказсене хăйĕн сывăх тусĕсенчен ытларах йышăнать. Фронтовик çемйисем валли панă заказсене те пуçăнçламаççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Инвалидсен кооперацин артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ инвалидсен кооперацин артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Канашри «Красный воин», Улатăрти «Союз инвалидов», Чакантарти «Красный стрелок» (Ишлей районĕ), Кирери (Улатăр районĕ) Киров ячĕпе тăракан артельсем ăмăртура мала тухнă тесе йышăннă.

Канашри «Красный воин» артель июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 175,4 процент, ширпотреб енĕпе 114,9 процент пурнăçланă. Май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци туса кăларассине 3 процент ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне «Красный воин» артель алличех (правлени председателĕ Корчагин юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ) хăвармалла тунă тата социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме Улатăрти «Союз инвалидов» артеле (правлени председателĕ Сивоприков, горсовет исполкомĕн председателĕн ĕçне туса пыракан Гуськов юлташ), июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 131,3 процент, ширпотреб енĕпе 119,7 процент пурнăçланăскере, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци туса кăларассине 9 процент ӳстернĕскере—5 пин тенкĕ; Чакантарти «Красный стрелок» артеле (правлени председателĕ Артамонов юлташ), июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 198,4 процент, ширпотреб енĕпе 209,8 процент пурнăçланăскере, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци туса кăларассине 1.4 процент ӳстернĕскере—4 пин тенкĕ; Кирери (Улатăр районĕ) Киров ячĕпе тăракан артеле (правлени председателĕ Дмитриев юлташ), июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 154,9 процент, ширпотреб енĕпе 239,9 процент пурнăçланăскере, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци туса кăларассине 13,5 процент ӳстернĕскере—4 пин тенкĕ пама йышăннă.

Совнарком 1943 çулхи июнь уйăхĕнче çак артельсем лайăх ĕçленине палăртнă: Шупашкарти «Чебторгиз» (правлени председателĕ Мицина юлташ), Çĕмĕрлери «Партизан» (правлени председателĕ Полумордвинов юлташ). Шĕнерти (Калинино районĕ) «20 лет Чувашии» артель (правлени председателĕ Кудряшов юлташ) лайăх ĕçленине палăртнă.

Кунсăр пуçне, Чăваш АССР Совнаркомĕ июнь уйăхĕнче Вăрнар, Йĕпреç, Пăрачкав, Сĕнтĕр, Первомайски районĕсенчи, Туганашри (Хĕрлĕ Чутай районĕ), Сиккассинчи (Канаш районĕ), Кӳкеçри (Шупашкар районĕ) артельсем начар ĕçленине палăртнă.

Промысла кооперацин артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ промысла кооперацин артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура Шупашкарти Лесхимартель (Чăвашдревпромсоюз системине кĕрет), Канашри «Авангард» артель (Чăвашпромсоюз системине кĕрет), Шупашкарти «Вышивка» артель (Чăвашшвейпром системине кĕрет,) Çĕрпӳ районĕнчи Абакассинчи артель (Чăваштаппромсоюз системине кĕрет) çĕнтернĕ тесе йышăннă.

Шупашкарти лесхимартель июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 314 процент, ширпотреб енĕпе 417 процент тултарнă, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 10,3 процент ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Канашри Сталин ячĕпе тăракан артельтен илсе, Шупашкарти лесхимартеле (правлени председателĕ Викторов юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) памалла тунă, социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме ăна 10.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме Канашри «Авангард» артеле (правлени председателĕ Васильев юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ), июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 107,3 процент, ширпотреб енĕпе 104,5 процент тултарнăскере, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 3 процент ӳстернĕскере—10.000 тенкĕ; Шупашкарти «Вышивка» артеле (правлени председателĕ Егорова юлташ), июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 147,5 процент, ширпотреб енĕпе 245 процент тултарнăскере, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 16,2 процент ӳстернĕскере—5.000 тенкĕ; Абакассинчи (Çĕрпӳ районĕ) артеле (правлени председателĕ Тимофеев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Хабаров юлташ), июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 209,3 процент, ширпотреб енĕпе 103,4 процент тултарнăскере, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 50 процент ӳстернĕскере—5.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ 1943 çулхи июнь уйăхĕнче çак хуласемпе районсем лайăх ĕçленине палăртнă:

Канаш хули (горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ), вăл июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 133 процент, ширпотреб енĕпе 119 процент тултарнă, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 33 процент ӳстернĕ, хулари пур артельсем те плана пурнăçланă.

Шупашкар хули (горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ), вăл июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 132 процент, ширпотреб енĕпе 152 процент тултарнă, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 70 процент ӳстернĕ, хулари 13 артельтен 8-шĕ плана пурнăçланă;

Çĕмĕрле районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Носков юлташ) вăл июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 119,5 процент тултарнă, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 30 процент ӳстернĕ, районри 5 артельтен 3-шĕ плана пурнăçланă;

Сĕнтĕр районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Свешников юлташ), вăл июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 118,4 процент, ширпотреб енĕпе 115,9 процент тултарнă, районри 7 артельтен 5-шĕ плана пурнăçланă;

Сĕнтĕрвăрри районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Макланкин юлташ), вăл июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 108,8 процент, ширпотреб енĕпе 100.7 процент тултарнă, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 41 процент ӳстернĕ, районри 12 артельтен 6-шĕ плана пурнăçланă;

Октябрьски районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Петров юлташ), вăл июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 112,1 процент, ширпотреб енĕпе 112,7 процент тултарнă, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 2 процент ӳстернĕ, районри 4 артельтен 2-шĕ плана пурнăçланă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ июнь уйăхĕнче Вăрнар, Комсомольски, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Пăрачкав, Советски, Чкаловски тата Тăвай районĕсенчи промысла кооперацин артелĕсем начар ĕçленине палăртса, райсовет исполкомĕсен председателĕсене артельсен ĕçне лайăхлатмашкăн татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварнă.

Виç-тăват норма тултараççĕ

Якунин юлташ главнăй инженер пулса тăракан завод, май уйăхĕнче тухăçлăн ĕçлесе, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çакăн хыççăн завод коллективĕ Хĕрлĕ ялава июнь уйăхĕнче те хăйĕн аллинчех хăварассишĕн тата тухăçлăрах ĕçлеме тытăнчĕ, хăй çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕ, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕ.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, 70 çулхи рабочи М. Л. Инпролигатор юлташ ĕç нормине 260 процент тултарса пырать. Унпа пĕрле ĕçлекен старриксем Левченко токарьпе Мороз слесарь задание 300-шер процент тултараççĕ. Фрезеровщик Н. Королев июнь уйăхĕнче ĕç нормине 460 процент таран пурнăçларĕ. Стахановец-слесарь, ВКП(б) членĕ Ященко юлташ кашни кунхи ĕç нормине 450 процент тултарса пырать. Вĕсем тухăçлă ĕçленипе пĕрлех пысăк пахалăхлă продукци туса кăлараççĕ. Кинсбургскипе Троицкий юлташсем начальник пулса тăракан цехри рабочисем те куллехи нормăна икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Заводри рабочисенчен нумайĕшĕ çамрăксем. Вĕсем станок умĕнче ĕçлеме пуçлани нумай та пулмасть-ха. Апла пулин те вĕсем ĕçре ватă производственниксенчен юлмаççĕ. Акă, Коновалова комсомолка-токарь заводра ĕçлеме пуçлани пĕр çула яхăн. Кĕске вăхăт хушшинче вăл хăйĕн ĕçне аван вĕренсе çитнĕ. Халĕ уйăхри задание 300 процента çити тултарать. Моргунова юлташ май уйăхĕнче задание 130 процент тултарнă, июнь уйăхĕнче ĕç нормине 320 процент тултарса ĕçлет.

А. КРАСНОВ.

Тырпулсене пуха кĕртме хатĕрленнине тĕрĕслетпĕр

Хĕрлĕ Чутай районĕ уборкăна начар хатĕрленет

Республикăри нумай колхозсем тырпулсене уйхирчен пуха кĕртме тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕç. Анчах Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсенче çакна курма çук. Чылай колхозсенче çич кирлĕ ĕçсене хал ха-варассĕ. Тырпулсем çумкурăкĕсем пусса илнипе лараççĕ. Çум çумласа пĕтерни колхозсем районра сукхала. Нумай колхозсене çуртырне пĕрер хут çумласа тухнă та хăпланса ларнă. Çитменнине ку ĕçе те çиелтен тунă. «Прогресс», «Сталь», «Новая жизнь» колхозсенче тырпула çумкурăкĕсем тапсатманă пĕрех.

Районри руководительсем, агрономсем колхозсенче ĕç юлса пынине кураççĕ, анчах кирлĕ пек мера йышăнмаççĕ. Çĕрĕç пайĕнче ĕçлекен Назаров юлташ «Сталь», «Новая жизнь» колхозсенче уполномоченнăй пулса пĕр эрне ытла пурăннă, анчах çум çумлас ĕçе организацилемен. Çĕрĕç пайĕн старшин колхозсенче Шипколин юлташ колхозсене сайра-хутра çеç пулать. Вăхăта ытларах кабинетра ирттерет.

«Красный остров», «Пятилетка» колхозсен ырашĕсем çинче тырра пиççе çитес вăхăтра çинче кĕрекен «гуська» ятлă хурт-кăпшанка сарăлнă. Анчах çак хурт-кăпшанкăпа ниммĕнле те кĕрешмеççĕ. Районра çĕрме тăвас ĕç те начар пырать. Пурĕ 4500 гектар сухаласа хăвармалла, анчах плана тултарасси ха инçе-ха.

Ялхуçалăх машинисене, çурлаçавасене, урапасене юсама хăшпĕр колхозсенче халĕ те тытăнман. Нумай колхозсенче жнейкăсем, вейлкăсемпе сортировкăсем, молотилкăсем кĕркунне ăçта юлнă, халĕ те çавăнтах лараççĕ. Юр-çăмăрта машинăсен пайĕсем тутăхса юрăхсăра тухнă. Жнейкăсен çĕççисем çухалса пĕтнĕ. Çапла «Мотор» колхозăн икĕ жнейкин те çĕççисем тутăхса юрăхсăра тухнă. Районри колхозсенче жнейкăсем 146 пулсан, çĕлеме юрăхлисем 56 çеç, молотилкăсем 118 пулсан, 26-шне çеç юсанă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсен ялхуçалăх машинисен хăшпĕр пайĕсене Сĕмĕрлери сельхозснабран кайса илмелле. Паянхи куна хăшпĕр колхозсем çеç кайса хăйсене кирлĕ пайĕсене илсе килнĕ. Чылай колхоз руководителĕсем пайĕсем пĕтĕмĕшпех çук тесе лараççĕ. Районри руководительсем енчен те ку енĕпе кăтартусем пулман. Çурласене шăллас, кĕрепелĕсене çавасем тăвас ĕç пуçланман та пекех.

Хăшпĕр колхозсенче 5—6 ĕç лашин пуçне пĕр урапа çеç тивет. Çапла «Пятилетка» колхозра тăватă лашана пĕр урапа. «Авангард» колхозра улта лашана пĕр урапа çеç тивет.

Тырпул пиççе çитиччен районри колхозсен машинисене юсаса пĕтермелле, машинăсемпе ĕçлеме кадрсем хатĕрлемелле. МТС-па районри çĕрĕç пайĕ машинăсене юсакан курсне июлĕн 25-мĕшĕнче уçма йышăннă пулнă. Анчах курса 185 çын вырăнне 2 çын çеç пухăннă.

В. ЛЮБИМОВ.

Тырă вырма тухма хатĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлĕн 8-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Янтик ялсоветĕнчи «Волга» колхоз тырпулсене пуха кĕме тĕплĕн хатĕрленет. Вырă жнейка тырă вырмаллаха хатĕр. Вĕсене лайăх юсанă, татса çĕрсе лартнă. Витĕ итемсене вырме те тасатнă, тăрăшсене çĕнĕрен витнĕ. Колхоз тырпулсене вырса пухма, аван çапма тата государствăна тырă памалли çине те пынă ĕçлеме ăна тĕп тырă пайĕсем çинче хатĕр. Пĕтĕм ĕç кайнă тыра ытла пулĕ, кăçал пĕлтĕрхинчен те пысăк тухăç илме шанаççĕ. Колхоз тырпулсене вырма пуçне уйра тăракан колхоз тырпулсене пуçне 95 çын пуçласа ĕçлĕç, вăл шутра çамрăк ачасем те, ытти çынсем те пур. 145 çурла, 27 кĕрепле тата çава шăлласа пуçтарса хунă. Уборка вăхăтĕнче пĕрлешсе ăнлăтма тулли продуктсем çителĕклĕ памалла хатĕрле хунă.

Халĕ колхоз уйрă çулса пухрĕ, çĕрырăсене хатĕрлекен ĕçсенче пĕтĕмпех ырă тасатнă. Анчах колхоз тырпулсене вырма ятарлă бригада тунă, колхоз вырма тата кĕрекен колхоз тырпулсене вырма пуçне уйра ытларах ĕçлеме пĕр каласа хатĕрлет.

Уборкăна ниттерме хатĕрленнине Тельман ячĕпе тăракан колхозра та тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслу комиссийĕ Тельман ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленнине палăртрĕ. Тельман ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене 6 талăкра, çурхи тырăсене 7 талăкра пуха кĕртме шутлать. Машинăсемпе тата кĕрепеллĕ çавасене ытларах ĕçлеме шутлаççĕ. 15 кĕрепе пулсан тата кĕрепелĕ çавасене вырма хатĕрленнĕ.

Колхоз тырпулсене вырма тухнине хатĕрлесе çитерсе сиенсĕр вырма пĕтерме тытăнать. Сельсоветра вырма тăрăх тата ку ĕçре, пĕр тата ытти çынсем те пур.

С. ШАДИН.

Кашни колхозник хăй мĕн ĕçлессине пĕлсе тăрать

ЭЛЕК, июлĕн 9-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Тури Выляр Сталин ячĕпе тăракан колхоз кăçал 521 гектар çинче тырă пуса илмелле. Ку шутра кăрхи тырă 87 гектар. Колхоз тырпула пуха кĕртме ĕç плане тунă. Пĕтĕм ĕçе кунта кăçал хăварт туса ирттерме палăртнă. Уйхирте пурĕ 267 çын ĕçлемелле. Вĕсене кун-ти хатĕрсем кăçал кунта хатĕрлесе пĕтернĕ.

Пĕр колхоза, 4 колхозника, 4 вылăх ĕçе хатĕр. Кĕлте куме тата тырă туртма 50 сăн урапа тата лаша тавраш хатĕр. Кĕрепеллĕ çавасем ĕçе хатĕр ытларах ĕçлĕç.

Хĕрт ĕç вăхăтĕнче колхоз правленийĕ колхозниксене кунне икĕ хут столовăйра апатлантарма шутлать тата ачасен ясли ĕçлĕ. Эрнере 207 шăвăрап çăвăт. 80 пăрса, 35 пăт хура тулă. 4 пăт пăрсар, 55 пăт тулă кĕрпи тата 4 пăт тырă уйăрса хунă.

Анчах кунта жнейкăсене хатлама ыттисене хатĕрлесен. Колхоз кăçал хатĕрленĕ тирĕ. Жнейкăсене халĕ те юсас пĕтермен.

Юманайĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра та тырă вырма хатĕр тăрать. Колхоз ĕçре ĕçлеме пулăшакан кăçал жнейкăсемпе тырă вырма хатĕр. Çавăнпа вĕсене ĕçре вăхăтра ĕçлеме пулать. Государствăна тулăх тырăсене ĕçлеме пуçлаççĕ. Государствăна тыра парса татрĕ.

Х. ЛИСИН.

Государствăна тырă параççĕ

КАЛИНИНО. Мачамăшри «Первомайски» колхоз членĕсем 1943 çулшăн государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă памалли задание срокчен пурнăçласшăн. Колхоз председателĕ комсомолец В. Князев юлташ пуçарнипе, колхозниксем Заготзерно пунктне тырă туртараççĕ. Тырра Хĕрлĕ обозсем организацилесе леçеççĕ. Çак кунсенче вĕсем Заготзерно пунктне 63,63 центнер тĕштырă леçсе пачĕç. Ку вăл колхозпа колхозниксем кăçал государствăна тырă памалли обязательствăна 67 процент тултарни пулать.

«Первомайски» колхоз членĕсенчен Кăмпалти «Новый путь» колхозри колхозниксем те юлмаççĕ. 1943 çулта колхозăн государствăна 169,28 центнер тĕштырă памалла. Колхозниксем çак иртнĕ кунсенче, хĕрлĕ обозсем организацилесе, Заготзерно пунктне 76,48 центнер тĕштырă леçрĕç.

В. ЗАЙЦЕВ.

КУНТА ВАСКАМАÇÇĔ

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Государствăна çăмарта парас ĕç—халĕ тумалли ĕç. Çак ĕç районра сÿрĕккĕн пулса пырать-ха. Районри хатĕрлев конторĕ государствăна çăмарта парас ĕçре юлса пыракан колхозсене васкатмасть. Район çăмарта памалли плана мĕнпурĕ те 38 процент çеç пурнăçланă. Вăл шутран колхозсем—46 процент, колхозниксем—35 процент, единоличниксем—14 процент çеç тултарнă. «Красный пахарь» колхозăн 8352 çăмарта памалла пулсан, паянхи куна 1118 çăмарта кăна панă. Высоковкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз государствăна çăмарта памалли плана 13 процент, «Оборона» колхоз 18 процент, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз—17 процент, «Красный луч» колхоз—19 процент çеç пурнăçланă. Ку ĕçре «Молодой колхозник», «Майăн 1-мĕшĕ», «Ударник» колхозсем те юлса пыраççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

КОГ-САГЫЗ ВĂРЛĂХĔ ПУХРĔÇ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, июлĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). «Мотор» колхоз кăçал кок-сагыз чылай акрĕ. Иртнĕ çулхи плантаци те аннă. Çак паха культурăна пăхса ÿстерме колхозра уйрăм звено тунă, звено ĕçне ертсе пыма Мария Капитонова колхозницăна шанса панă. Кок-сагыз тухăçлă пултăр тесе, звено кăçал ырми-канми ĕçлет. Плантацие виçĕ хутчен кăпкалатса тухса удобренисем панă, çум курăкĕсенчен пачах тасатнă. Халĕ звено иккĕмĕш çул ÿсекен кок-сагыз вăрлăхне пуçтарчĕ, 40 килограмм паха вăрлăх пуçтарса илчĕ.

В. Кондаков.

Совет çĕршывĕнчи халăх сывлăхне сыхлас ĕç

1918 çулхи июлĕн 11-мĕшĕнче РСФСР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен калакан декрета алă пуснă. Çав декретпа советсен сывлăха сыхлас ĕçне пуçарса янă.

Унтанпа ĕнтĕ 25 çул иртрĕ. Çав вăхăт хушшинче сывлăха сыхлас ĕçре совет влаçĕ питех те пысăк çитĕнÿсем турĕ. Советсен сывлăха сыхлас ĕçĕ 25 çул хушшинче тунă çитĕнÿсене пирĕн Чăваш республикинче медицинăпа санитари ĕçĕ вăйлăн аталанса пыни те кăтартса парать. Çыншăн, унăн пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн сталинла тăрăшни кунта уйрăмах уççăн палăрса тăрать.

Хальхи чăваш çĕршывĕн территорийĕ çинче 1913 çулта 680 койка вырнаçмалăх начар йĕркеленĕ 19 больница, 14 фельдшер пунктĕ, 4 аптека кăна пулнă. Пĕтĕмпе 22 тухтăр, пĕр шăл тухтăрĕ, 98 фельдшерпа фельдшерица-акушерка. 14 фармацевт ĕçленĕ. Сывлăха сыхлас ĕçĕн бюджечĕ ун чухне пĕтĕмпе те 326 пин тенкĕлĕх кăна пулнă, урăхла каласан çакă вăл кашни çын пуçне 40 пус тивнĕ.

Çавăн пек пĕчĕк бюджетпа тата медицинăпа санитари учрежденисен çавăн пек пĕчĕк йышĕпе халăха медицина енчен мĕнле те пулин ăнăçлă пулăшу парасси çинчен калаçмалли те пулман. Врачсем вырăнне, уйрăмăнах ялсенче, çынсене юмăççемпе тухатмăшсем вĕрсе-сурса «сиплене».

Революциччен чăваш çĕршывĕнче тĕрлĕ ерекен чирсем анлăн сарăлнă, çынсем, уйрăмăнах ачасем, йышлăн вилнĕ, талккишĕпех тенĕ пекех трахома, кĕçĕ сарăлнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци, патша тытăмĕн туралăх сăнчăрне çапса аркатса, халăхăн пурнăçне, унăн культурине лайăхлатса ÿстерме анлă майсем туса пачĕ.

Сывлăха сыхлас ĕçе тата çынсене медицина енĕпе вĕрентес ĕçе, Наркомздравпа райздравсен аппаратне тытса тăмалли расходсене шутламасăр, пирĕн республикăра 1923 çулта 52 пин тенкĕ хывнă, 1927 çулта — 1.248,9 пин тенкĕ, 1932 çулта—3.122,5 пин тенкĕ, 1937 çулта—22.332,2 пин тенкĕ, 1942 çулта—25.360 пин тенкĕ хывнă, 1943 çулта 33.468 пин тенкĕ хывма палăртнă.

Çапла ĕнтĕ, государство пирĕн республикăра 1943 çулта халăх сывлăхне сыхлас ĕçе, 1923 çулхипе танлаштарсан, 643 хут ытларах укçа-тенкĕ хывать. Государство çавтери пысăк укçа-тенкĕ пани сывлăха сыхлас ĕçре пысăк çитĕнÿсем тума май парать.

25 çул хушшинче Чăваш республикинче больницăсен йышĕ чылай ÿсрĕ. Хуласемпе рабочи поселокĕсенче тата ялсенче çав вăхăт хушшинче чăплă больницăсем купшарăн туса лартнă. 1913 çулхи 19 больница вырăнне 1943 çулта 58 больница ĕçлет, çав вăхăт хушшинчех больницăсенчи койкăсен хисепĕ 680-ран 2.418 çитни, ялсенче вара 251 койкăран 1.132 койкăна çитни, урăхла каласан, 4,5 хут ÿснĕ.

1920 çулта пирĕн республикăра кашни больница пуçне вăтамран 36 пин çын, больницăри кашни койка пуçне—927 çын тивнĕ. Халĕ ĕнтĕ кашни больница пуçне—16.802 çын, кашни койка пуçне—403 çын тивет.

Фельдшер пункчĕсен хисепĕ 1913 çулта пулнă 14 пункт вырăнне 1943 çулта 191 пункта çитни, урăхла каласан 13 хут ÿснĕ. Çав вăхăт хушшинчех аптекăсен хисепĕ 10 хут ÿснĕ.

Çынсене сыватас тата чиртен сыхлас тĕлĕшпе больницăсен тулашĕнче, халăх хушшинче, пысăк çитĕнÿсем тунă. Совет влаçĕн çулĕсенче туса лартнă диспансерсем, ача çуратмалли çуртсем, консультацисем, сĕт кухнисем, ача яслисем, поликлиникăсем, санаторисем, трахомпункчĕсем тата ыттисем çинчен, çавăн пекех врачсен çакăн пек специальноçĕсем çинчен—педиатор, офтальмолог, эпидемиолог, рентгенолог, физиотерапевт, физиатор, малярииолог çинчен революциччен чăваш çĕршывĕ пĕлмен, пĕлме те пултарайман, мĕншĕн тесен медицинăн çавăн пек уйрăм енĕсем ун чухне пирĕн пачах та пулман.

Халĕ Чăваш республикинче 6 поликлиника, туберкулез енĕпе ĕçлекен 2 диспансер, туберкулезпа чирлисене сыватакан 2 больница, ÿт-тирпе венерологи енĕпе ĕçлекен 3 диспансер, куç чирĕсемпе ĕçлекен 19 врачебнăй пункт, ача амăшĕпе ачасен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен методика центрĕ, ача çуратмалли 6 çурт, хĕрарăмсен 4 консультацийĕ тата ачасен 26 консультацийĕ, тăтăшах ĕçлекен 42 ача ясли, 62 акушер пункчĕ, колхозсенче ача çуратмалли 73 çурт, фельдшерсемпе акушерсен 32 пункчĕ, малярипе енĕпе ĕçлекен 7 станципе пункт, санитарипе эпидеми енĕпе ĕçлекен 13 станци, химипе бактериологи енĕпе ĕçлекен 8 лаборатори, 517 трахомпункт тата ыттисем те пур.

Медицина работникĕсен çĕнĕ, квалификациллĕ кадрĕсене йышлăн пăхса çитĕнтерес. 1913 çулхипе танлаштарсан, врачсен йышĕ 19 хут, медицинăн вăтам персоналĕн йышĕ—23 хут, фармацевтсен йышĕ—10 хут ытларах ÿснĕ.

Республикăра медицина ĕçне вĕрентекен 3 шкул пур. 1932 çултанпа вĕсем 2.993 медработник, вăл шутра 949 фельдшер, 617 акушерка, 724 медсестра вĕрентсе кăларнă. Кунсăр пуçне, трахомăна пĕтерес енĕпе ĕçлекен 2 пин сестра вĕрентсе хатĕрленĕ.

Сыватмалли тата профилактикăллă учрежденисемпе медицина работникĕсен йышĕ ÿсни халăхăн анлă массисене медицина енĕпе пысăк пулăшу парса пыма май парать. Халĕ ĕнтĕ кашни çын медицина енĕпе пулăшу илме пултарать. 1921 çулта амбулаторисене 455.243 çын пынă пулсан, 1942 çулта вара çав хисеп 1.956.799 çынна çитни, урăхла каласан 4 хут ытларах ÿснĕ.

Сыватмалли учрежденисене медицинăн çĕнĕ йышши хатĕрĕсемпе пуянлатса пыни тата специалист-врачсен кадрĕсем ÿсни халăха сыватас ĕçĕн пахалăхне тĕпренех лайăхлатма пулăшрĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн клиникăпа диагноз енĕпе ĕçлекен 40 ытла лаборатори, химипе бактериологи енĕпе ĕçлекен 8 лаборатори, 16 физиотерапевт кабинечĕ, 14 рентген кабинечĕ, шывпа тата пылчăкпа сыватакан пĕр лечебница, юн ямалли пĕр станципе 7 пункт тата халăха сыватмалли ытти тĕрлĕ ятарласа тунă учрежденисем те пур. Революциччен чăваш çĕршывĕнче вĕсем пачах та пулман.

Çапла ĕнтĕ, Чăваш республикинчи ĕççыннисем медицинăн çĕнĕ майĕсемпе усă курма пултараççĕ. Ку енĕпе Шупашкарти поликлиникăн ĕçĕ уйрăмах кăтартуллă пулса тăрать. Поликлиникăна 1931 çулта 102.242 çын пынă пулсан, 1942 çулта 323.169 çын пынă. Физиотерапевт пулăшăвĕ 1931 çулта пулнă 5.909 процедурăран 1942 çулта 99.133 процедурăна çитни ÿснĕ.

Патша саманинчен юлнă чи йывăр инкексенчен пĕри вăл чăваш ĕççыннисемшĕн трахома пулса тăрать. Трахомăна пула ĕлĕк нумай çынсем суккăр пулса ларнă. Совет влаçĕ трахомăпа кĕрешес ĕçе анлăн организацилерĕ, çак ĕçе сывлăха сыхлав органĕсем кăна мар, мĕнпур общественность хутшăнчĕ. Трахомăпа кĕрешме ятарласа тунă учрежденисене анлăн сарнисĕр пуçне, республикăра çав чиртен сыватмалли çĕнĕ меслете—çынсене хăйсем пурăнакан вырăнтах сыватмалли меслете ĕçе кĕртнĕ. Çав мĕнпур мероприятисене пурнăçа кĕртсе пырса, республика трахомăпа кĕрешес ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕ. 1928 çулта трахомлисен йышĕ халăх хушшинче 47 процент пулнă пулсан, халĕ çав хисеп 9—10 процента çити чакнă. Трахомăпа чирлисене 300 пин çынна ытла сыватнă.

Чечче чирне, тиф эпидемине тата ытти ерекен чирсене пĕтернĕ.

Туберкулезпа кĕрешме ятарласа сыватмалли учрежденисем — туберкулез диспансерĕсем, больницăсем тата Чуварлейпе Вăрнарта 300 койка вырнаçмалăх 2 санатори организациленĕ. Вĕсенче опытлă специалист-врачсем—12 çын ĕçлеççĕ. Туберкулезпа чирленисене пулăшас ĕçре медицина наукин çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе усă кураççĕ. Халичченех пысăк центрсенче кăна усă курнă искусственнăй пневмоторакс тата ытти тĕрлĕ активлă меслетсем Чăваш республикинчи лечебницăсен практикине анлăн кĕчĕç.

Пирĕн çĕршывра ачасемпе ача амăшĕсемшĕн сталинла тимлĕхпе тăрăшаççĕ. Революциччен чăваш çĕршывĕнче пĕчĕк ачасемпе ача амăшĕсем валли пĕр учреждени те пулман. Халĕ ĕнтĕ пирĕн ачасемпе ача амăшĕсен 40 консультацийĕ пур, урăхла каласан вĕсем халĕ ĕнтĕ пирĕн республикăра кăна 1914 çулта мĕнпур патша Российĕнче пулнинчен 4 хут ытларах. Çавăн пекех 2.326 ача вырнаçмалăх тăтăшах ĕçлекен 42 ача ясли тата колхозсем çуллахи уйăхсенче çулсерен организацилекен сезонлă яслисем пĕр пин ытла. Çав яслисене пĕтĕмпе 35—40 пин ача вырнаçать. Республикăра ачасемпе ĕçлекен 83 врач, 15 акушер-гинеколог пур. Пысăк çемьеллĕ ача амăшĕсене государство 50 миллион тенкĕ ытла пособи панă. Çав мĕнпур мероприятисене пула тата ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланнине пула, ачасем вилесси вăйлăн чакрĕ, çынсен йышĕ ĕнтĕ çулсерен ытларах та ытларах ÿсее пырать.

Ял халăхне медицина пулăшăвĕ парас ĕç чылай лайăхланчĕ. Ялсенче халĕ 134 врач, медицинăн вăтам персоналĕ—1373 çын ĕçлет. Ялсенчи врач участокĕсем пур тĕрлĕ сыватас ĕçе те анлăн туса пыраççĕ.

Совет влаçĕ халăх сывлăхне сыхлас ĕçре чĕрĕк ĕмĕр хушшинче тунă çитĕнÿсене Чăваш республикинчи ĕççыннисем пĕтĕм чун-чĕререн хавхаланса палăртаççĕ. Çав çитĕнÿсемшĕн вĕсем совет влаçне, Ленин—Сталин аслă партине, унăн наци политикине тав тăваççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсен ĕç условийĕсене чылай урăхлатрĕ; вĕсен ĕçĕ кăткăсланчĕ, сывлăха сыхлас ĕçĕн органĕсем умне çĕнĕ, татах та ответлăрах задачăсем тухса тăчĕç. Республикăри партипе совет организацийĕсем активлăн пулăшса пынипе, сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем вăрçă вăхăтĕнчи задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, Хĕрлĕ Çара мобилизацилес ĕçе чыслăн туса пыраççĕ, эвакогоспитальсен ĕçне кирлĕ пек йĕркелерĕç, вĕсене медицинăн кучухнехи хатĕрĕсем пур тĕслĕхĕсене те туптса пачĕç, граждансла халăх хушшинчи профилактикăпа сыватас ĕçе вăйлăн туса пыраççĕ.

Совет патриочĕсен аслă туйăмĕпе пурăнакан медицина работникĕсем вăрçă тĕрĕслевĕ витĕр чыслăн тухаççĕ, вĕсем малашне ĕçлеме практикăллă пуян опыт пухрĕç. Вăрçă республикăри ĕççыннисен сывлăхне сыхлас ĕçе хавшатаймарĕ. Ачасем вилесси те ÿсни пулмарĕ.

Чăваш республикинчен фронта кайнă медицина работникĕсем нумайĕшĕсем, хăйсен вăйĕсемпе пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр, çапăçу хирĕнче Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсен пурнăçĕсене çăлса хăвараççĕ. Чăваш халăхĕн хĕрĕ, Сĕнтĕрвăрри больницинче фельдшер пулса ĕçленĕ Федора Гайкина Ленин орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илме тивĕçлĕ пулчĕ. Шупашкар больницинче ĕçленĕ врачсем И. А. Краснов, П. Е. Ермолаев, Шупашкарти гинекологи больницин главнăй врачĕ И. Н. Николаев, Шăхасан районĕнчи больницăн врачĕ пулнă военврач Г. Г. Добров, фельдшерсем—Ф. И. Илларионов, М. Ф. Ванькова тата ыттисем те Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илчĕç.

Чăваш халăхĕ çавăн пекех тылра ĕçлекен медицина работникĕсене те пысăк хисепе хурса хаклать. РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ А. И. Ананьев, врачсем Н. С. Сорокин, Э. Б. Гринштунт, В. С. Обухов, хирург П. И. Сапожков тата ытти нумай юлташсем халăх сывлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ.

Чăваш республикинчи сывлăха сыхлас ĕçĕн органĕсем умĕнче халĕ государствăн пысăк задачисем тăраççĕ. Вăрçă вăхăчĕ медицинăпа санитарин кашни учрежденийĕнчен, совет медицинин кашни работникĕнчен вăя хĕрхенсе тăмасăр ĕçлеме ыйтать. Медицина работникĕсем халăх сывлăхне куллен, ывăнма пĕлмесĕр сыхласа тăма, çапла вара Хĕрлĕ Çарăн тылне татах та ытларах çирĕплетме тивĕçлĕ. Çакăнпа эпир хамăрăн юратнă тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнса кĕнĕ ирсĕр тăшмана çапса аркатас сехете çывхартатпăр.

А. ЛИХАЧЕВ,
Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ.

Чугунçул валли—вутă

Чугунçул валли вутă касса турттарас ĕçпе Вăрнар районĕ чылай юлса пырать. 5 пин кубла метр касса хатĕрлемелле, çавăн чухлех турттарса кăлармалла. Анчах Вăрнар районĕ июлĕн 2-мĕшĕ тĕлне 4.172 кубла метр çеç каснă, 3 430 кубла метр çеç турттарса кăларнă.

Ĕç юлса пыни—колхозсем ĕç вăйĕ çителĕклĕ паманнинче. Вутă хатĕрленĕ çĕрте кашни кун çуран 98 çын, лашапа 63 çын ĕçлемелле пулсан, июлĕн 2-мĕшĕнче çуран 78 çын, лашапа 51 çын çеç ĕçленĕ. Уйрăм колхозсем, тĕслĕхрен, Мамалайри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз, вутă хатĕрлемелли задание çурри те тултарман. Çавах та ку колхозран юлашки вăхăтра вăрманта пĕр çын та ĕçлемест. Çавăн пекех Çавалкас Хирлепуçĕнчи «Колхозница» колхозран вăрманта виçĕ çын ĕçлемелле пулсан, июлĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче пĕр çын та ĕçлемен.

Сăмах çук, лайăх ĕçлекен колхозсем те пур. Уйрăм колхозсенче чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçе тивĕçлипех пысăк хак параççĕ. «Волонтер» колхоз 55 кубла метр вутă касса хатĕрлемеллеччĕ. Ăна ку колхозри колхозниксем виçĕ кун хушшинчех пурнăçларĕç. Халĕ те «Волонтер» колхозран вăрманта икĕ çын вырăнне тăватă çын ĕçлет.

Чугунçул валли вутă хатĕрлемелли плана Вăрнар районĕнчи колхозсен çак кунсенчех тултармалла. Хĕрлĕ ялавлă района кая юлса пыни пачах килĕшмест.

Июлĕн 5-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).**

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

▲ Куславкка районĕнчи пионерсен лагерьне 80 ача пухăннă. Пухăннисем пурте пекех вĕренÿри отличниксем.

▲ Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз 63 тонна силос хывса, палăртнă плана ытлашшипех тултарнă.

▲ Ишлей районĕнчи Мамăш колхозĕнче утă çулма тухнăранпа ача сачĕ ĕçлет. Унта 50 ача çÿрет.

▲ Комсомольскинчи вăтам шкулта вĕренекенсен А. Павлова учительница ертсе пыракан отрячĕ «Большевик» колхозра ĕçлет. Çав отряд кашни кунах ĕç нормине 170 процент таран тултарса пырать.

▲ Красноармейски районри «Правда» колхоз çулйĕр ĕçĕсен заданине июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçланă.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: ĕнер тата июлĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен бомбардировщикĕсем çапла тăшман аэродромĕсене атакăланă. Истребитель-бомбардировщиксем тăшманăн Сицили утравĕ çинчи коммуникацийĕсене атакăланă.

Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июлĕн 7-мĕшĕнче кăнтăрла Англи самолечĕсем Çурçĕр Францири, Голланди тата Бельгири хăшпĕр объектсене тапăннă.

ГЕРМАНИ АВИАЦИЙĔН АНГЛИ ÇИНЧИ ĔÇĔСЕМ ЛĂПЛАННĂ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, юлашки икĕ эрне хушшинче Англи çине пĕр бомба та пăрахман. Ун пек лăпкă вăхăт çав тери нумайлăха пыни Англие сывлăшпа вĕçсе пырса тапăнма пуçланăранпа та пулман.

Агентство шухăшĕпе, Германи авиацийĕ Англие тапăнма пачах пăрахни Германин сывлăш-çар вăйĕсене Хĕвелтухăç фронтне янипе, нимĕçсен запаслă чăсĕсемпе горючи çитменнинчен (горючи вĕсен Руршăн пынă çапăçура питĕ нумай пĕтнĕ) тата союзниксем иккĕмĕш фронт пуçласа ярассине кĕтсе, нимĕçсем хăйсен сывлăш-çар вăйĕсене тĕрĕс-тĕкĕл усрама тăрăшнинчен килет.

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: июлĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Кула заливĕнче (Çĕнĕ Георгипе Коломбангара утравĕсем хушшинче) пулса иртнĕ тинĕс вăрçинче японецсене питĕ вăйлăн çапса хуçнă, вĕсене сахалтан та 9 çар карапне пĕтерсе тăкнă.

Коммуникере тата çакна пĕлтернĕ: союзниксен войскисем Çĕнĕ Георгий утравĕ çине июлĕн 5-мĕшĕнче тул çуталаспа пырса аннă. Десант аннинчен союзниксен шыв çинчи карапĕсем тăшманăн Кула заливĕнчи базисене персе çĕмĕрнĕ. Çав кăçах союзниксен çĕр çинчи войскисен пĕр пайĕ Рендов утравĕ çинче Дзапан бухтине йышăнса илнĕ. Ку бухта Мундари аэродромран 10 километр хĕвелтухăçнерехре выртать.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). США-н тинĕс министерстви çапла пĕлтерет: июлĕн 6-мĕшĕнче Кула заливĕнче Японин тинĕс-çар вăйĕсемпе çапăçнă чухне Америкăн «Елена» ятлă çăмăл крейсерне шыва путарнă (унăн водоизмещенийĕ 9700 тонна пулнă).

США ХАЙĔН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕНЕ ÿСТЕРЕТ

НЬЮ ЙОРК, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй даннăйсем тăрăх, 1944 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне США-ра çара çĕнĕрен 2 миллион çын, çар промышленноçĕнче ĕçлеме 1 миллион та 600 пин çын мобилизацилемелле. Хальхи вăхăтра США-н хĕçпăшаллă вăйĕсен йышĕнче 9 миллион та 300 пин çын шутланать.

Çар промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен хисепĕ 10 миллионран 11 миллиона çитмелле. Тинĕс-çар флотĕнче килес çулăн малтанхи 6 уйăхĕ хушшинче 500.000 çын хутшăнмалла.

Пĕлтерÿ

Июлĕн 11-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра лекци пулать. Лекци теми: «Вырăс çарĕн геройла традицийĕсем».

Лекцие лектор Рассудов юлташ вулать.

Билетсене сад кассинче сутаççĕ.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци Управленийĕ Шупашкарти сассăр кино механикĕсен курсне тата Хусанти саслă кино механикĕсен курсне вĕренме илет.

Шупашкарти курсра 26 кун вĕренмелле Вĕрентме июль уйăхĕн 10-мĕш числинче тытăнаççĕ.

Хусанти курсра 4 уйăх вĕренмелле. Вĕрентме августăн 25-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Дом Советов, Управление Кинофикации. Отдел кадров. Телефон—Советсен çуртĕ, добавочнăй № 1—00. Кунсăр пуçне тата Кинофикаци Управленийĕн Межрайоннăй отделĕсенче ыйтса пĕлме пулать.

Шоферсен курсне веренме илеççĕ. Вĕрентме çак çулхи июль уйăхĕн 10-мĕш числинче пуçлаççĕ. Вĕренессе 2 уйăх вĕренмелле. Арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ. 17 çултан кĕçĕн пулмалла мар. (1926-мĕш çулхи август уйăхĕнчен каярах çуралнисене илмеççĕ). Вĕренме илнисене уйăхсерен 150 тенкĕ стипенди параççĕ, апат çитереççĕ (ирхине тата кăнтăрла).

Çак адреспа пырса ыйтмалла: Шупашкар хули, Калинин урамĕ, 51-мĕш номерлĕ çурт, кадрсен пайĕ.

Кĕрес текен колхозниксен хăйсемпе пĕрле колхозри ĕçрен хăтарни синчен калакан справка пулмалла.

3—3

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—91, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1785 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п.